# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчеле тухать

8 (8774) № * Юнкун, 2020 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 5-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕнетнĕ программа хатĕрлеççĕ

***«Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕпе экономикине хăвăрт аталантармалли программине çĕнĕлĕхсем йышăнса çывăх вăхăтра туса хатĕрлемелле», – тенĕ Олег Николаев***

Нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнче иртнĕ планеркăра Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев Чăваш Республикин Правительстви умĕнче тăракан черетлĕ тĕллевсене палăртнă.

«Çывăх вăхăтрах пирĕн социаллă пурнăçпа экономикăна хăвăрт аталантармалли программăна хатĕрлесе çитермелле. Вăл е ку çул-йĕр енĕпе пурнăçламалли мероприятисемшĕн яваплă депутатсене тата ĕç тăвакан влаç органĕсенче тăрăшакансене çакна шута илме ыйтатăп. Асăннă ыйтăва çавăн пекех общество организацийĕсемпе, муниципалитет пĕрлĕхĕсен пуçлăхĕсемпе программăна хушăмсем кĕртес тата ăна тĕплĕнрех тăвас тĕллевпе сӳтсе явмалла. Ку ĕçе кĕске вăхăтра пурнăçламалла», – тесе пĕлтернĕ Олег Николаев.

Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине уявласси те тивĕçлĕ шайра иртмелле тесе уйрăммăн палăртнă.

«Президент хушăвĕсемпе килĕшӳллĕн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен çынсем тĕрĕс информаци илме пултарччăр тесе архивра документ материалĕсем хатĕрлемелле, центрсем тумалла. Çакă çитĕнекен ăрăва воспитани пама пулăшать», – тенĕ Олег Николаев.

Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине палăртакан уяв мероприятийĕсем пирки сăмахланă май, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан культура пулăмĕсен марафонне общество тата коммерцилле мар организацисен представителĕсене йышлăн хутшăнтармаллине аса илтернĕ.

«Уява тĕрлĕ кăсăк пулăмсемпе тивĕçтермелле, унта чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе культурин пуянлăхне туллин çутатмалла», – тенĕ Олег Николаев.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-службы.**

## Шкулпа çыхăнтарнă пурнăç



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан И. Осипова Калайкассинчи вăтам шкул хыççăн Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Алла диплом илнĕренпех Ирина Венедиктовна ачасене вĕрентес ĕçре. Хастар вĕрентекенĕн пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ – 32 çул. Вĕсенчен 19 çулне Калайкассинчи вăтам шкулта ĕçлет. «Ачасем итлени, тăрăшса та мал туртăмлă вĕренни пурнăçăма шкулпа çыхăнтарни тĕрĕс пулнине çирĕплетет», – терĕ вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекен черетлĕ урока васкаса.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Районта

## Район кунне уявлатпăр

Район кунне халалланă уяв мероприятийĕ кăçал республика тĕп хулинче Шупашкарта февралĕн 21-мĕшĕнче К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче иртет. Ăна Раççей Федерацийĕнчи Асăнупа мухтав çулталăкне тата Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халаллаççĕ.

Уява хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕ район администрацийĕнче февралĕн 4-мĕшĕнче иртрĕ. Ларăва комитет председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ. Ларура комитет членĕсем уяв мероприятине тĕплĕ хатĕрленсе çӳллĕ шайра ирттересси çыхăннă актуаллă ыйтусене сӳтсе яврĕç.

**Хамăр инф.**

## Вăрçă çинчен, ентешсем çинчен

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Сталинград патĕнчи çапăçу пулнăранпа кăçал 77 çул çитрĕ. Çавна май истори страницисемпе тĕплĕнрех паллаштарас тĕллевпе Муркашри тĕп библиотека ĕçченĕсем Муркаш шкулĕнчи вĕренекенсемпе тĕл пулу йĕркеленĕ.

Литературăпа патриот салонĕн мелĕпе йĕркеленĕ тĕл пулура шкул ачисем çав çапăçу пирки каласа кăтартакан кинохроника кадрĕсене пăхнă. Çавăн пекех вĕсем «Сталинградская битва» историпе астăвăм музей-заповедникне виртуаллă майпа çитсе курнă.

Çав хăрушă çапăçăва хутшăннă пирĕн ентешсем – Алексей Капитонов, Григорий Илугин, Михаил Данилов, Николай Цеперов, Совет Союзĕн Геройĕ Борис Васильев çинчен каласа пани ачасене уйрăмах тыткăнланă.

## Фестиваль хĕрӳ иртет

«Чечеклен, юратнă Муркаш ен!» фестиваль-конкурс районта малалла пырать. Паянхи кунччен вăл 10 ял тăрăхĕнче пулнă та ĕнтĕ. Жюри членĕсем вырăнти коллективсен пултарулăх шайĕ ӳснине, çавăнпах вĕсене хак пама та çăмăл марринe палăртаççĕ.

Конкурса Оринин, Кашмаш тата Йӳçкасси халăх театрĕсем те хутшăнаççĕ. Вĕсем куракана хăйсен çĕнĕ спектаклĕсемпе уйрăм кунсенче савăнтарĕç. Спектакльсене, вырăна кура, февралĕн 21-мĕшĕнче Оринити, февралĕн 26-мĕшĕнче Кашмашри, февралĕн 28-мĕшĕнче Йӳçкассинчи Культура çурчĕсенче кăтартма планланă.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Сывлăх сыхлавĕ

## Врач патне портал урлă çырăнмалла

***2020 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен врач патне электрон мелпе Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ урлă кăна çырăнма пулать***

«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕн шайĕнче Чăваш Енре 2020 – 2024 çулсенче Республикăн медицина информацийĕн пĕрлехи тытăмне çĕнетессипе ĕçсене малалла пурнăçлаççĕ. Çак тытăма РФ Сывлăх сыхлав министерствин требованийĕсемпе килĕшӳллĕн информаци ресурсĕсене çăмăллатас тата стандартизацие пăхăнса ĕçлес тĕллевпе йĕркеленĕ.

Пысăк ĕçе тытăмăн «Электронная регистратура» пайĕнчен пуçăннă. Çапла поликлиникăсенче врач патне çырăнасси 2020 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса Патшалăх услугисен пĕрлехи порталĕ урлă кăна пулса пымалла. Республика больницисенчи врачсем патне поликлиника врачĕсем çырăнса пама тивĕç.

Врач патне тӳлевлĕ йышăнăва çырăнас тесен «Электронная регистратура» регион порталĕ урлă çырăнмалла.

Врач патне регистратурăра тата шăнкăрав йышăнакан центр урлă çырăнасси улшăнмасть.

Электрон мелпе врач патне йышăнăва çырăнасси, апла пулсан врач патне каймалли талон илесси çак йĕркепе пулса пымалла:

1. Пĕрлехи порталăн **www.gosuslugi.ru** сайтне кĕмелле. Харпăр хăйĕн кабинетĕнче авторизациленмелле. Пĕрлехи порталта кун пек кабинет çуккисен регистрациленмелле.
2. Порталăн тĕп страницинче «Запишитесь к врачу» пая кĕмелле.
3. Унта малалла мĕн тумалли пирки тĕплĕ çырса пани пур. Ăна вуласа тухнă хыççăн «записаться» текен хушăма кĕмелле.
4. Çак хушăм страницинче регион кодне, харпăр хăйĕн даннăйĕсене çырса документăн формине тултармалла.
5. Хыççăнхи утăм – сиплевпе профилактика учреждениине суйласа илмелле.
6. Хăш медицина услуги кирлине палăртмалла.
7. Врачсен хушамачĕсене çырнă страницăра врача суйласа илмелле.
8. Специалиста суйланă хыççăн порталта суйласа илмелли вăхăтпа куна кăтартни пулать.
9. Çакна пĕтĕмпех йĕркеллĕ пурнăçланă хыççăн экран çинче эсир врач патне çырăнни пирки пĕлтерни тухать.
10. Талона килтех пичетлесе кăлармалла е терминалта илмелле.

**Чăваш Республикин влаç органĕсен порталĕнчен.**

Çырăнтару – 2020

## Июльтен илсе тăма

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма почта уйрăмĕсенче çырăнтарма пуçларĕç. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 480 тенкĕ те 6 пус.**

**Хаклă вулакансем! Хаçат çырăнассине кая ан хăварăр.**

**Редакци.**

## Саламлатпăр

Хисеплĕ, юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Юнкă ялĕнче пурăнакан **Валентина Петровна РОМАНОВĂНА** илемлĕ те сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, вăрăм, такăр кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр.



**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕсем, кинĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн чи хаклă, хисеплĕ, юратнă, ырă кăмăллă, ĕçчен мăшăр, анне, асанне, кукамай – Кăпас ялĕнче пурăнакан **Валентина Андреевна ЛАПТЕВА** февралĕн 6-мĕшĕнче 65 çул тултарать. Юбилей ячĕпе сана ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, савăнăçлă кун-çул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Эс пурри пире савăнтарать, пурăнма вăй-хал парса тăрать.



**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, кĕрӳшĕсем, кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ.**

Эпир хамăрăн чи çывăх та хаклă çыннăмăра – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Ирина Валерьяновна СЕМЕНОВĂНА** 50 çулхи юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн чăн пысăк телей. Чирлемесĕр, кулянмасăр нумай-нумай çул пурăн. Турă панă кашни кунпа килентсе, савăнса пурăнма хурçăран та çирĕп сывлăх сунатпăр. Кун-çулу кĕмĕл уйăх пек çутă пултăр. Пурнăçри кашни утăму сан ырлăхпа, юратупа, çутă ĕмĕтсемпе тултăр.



**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, ывăлĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, тăхлачи.**

Çитес кунсенче Милютакассинче пурăнакан **Ольга Григорьевна ПАЙКОВА** 85 çул тултарать. Юратнă аннене, асаннене тата хунямана сумлă юбилей ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – хĕвел те, чун ăшши те, телей те. Çĕре çити таймапуç сана, пурнăç паракан çăлкуçăмăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕ, виçĕ кинĕ, мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем.**

## Социаллă хӳтлĕх

# 11 пин çемье пулăшăва тивĕçнĕ

Пĕчĕк тупăшлă çемьесене Чăваш Енре пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн тӳлеме субсиди уйăрса парса пулăшаççĕ. Январь уйăхĕнче кун пек пулăшăва тивĕçнисем 11 пин те 663 çемье пулнă. Пулăшу сумми 23,7 млн тенкĕпе танлашать. 2020 çул валли çав тĕллевпе уйăрма республика бюджетĕнче 253,3 млн тенкĕ пăхса хăварнă.

Субсидие пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн тӳлеме каякан расхутсем çемьен пĕтĕмĕшле тупăшĕн 22 процентĕнчен ытла йышăнакан çемьесем тивĕçеççĕ.

**Чăваш Ен Ĕç министерствин социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центрĕ.**

## Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем отчет тăваççĕ

# Йӳçкасси тăрăхĕнче çулсене юсассипе çине тăрса ĕçленĕ

**Йӳçкасси ял тăрăх администрацийĕн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне тишкерсе хак пама, кăçалхи задачăсене палăртма территорире пурăнакансем январĕн 31-мĕшĕнче Йӳçкассинчи Культура çуртне пухăнчĕç. Отчетпа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин паллаштарчĕ. Тĕл пулăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – финанс пайĕн пуçлăхĕ Р. Ананьева, ытти явапла ĕçчен, вырăнти актив, ял çыннисем йышлăн хутшăнчĕç.**

Пуçлăх хăйĕн отчетĕнче палăртнă тăрăх, тĕрлĕ ыйтăва татса панă чухне вырăнта пурăнакансемпе, активистсемпе çыхăнса ĕçлени, çынсемпе тăтăшах тĕл пулса калаçни, вĕсен шухăшне пĕлсе тăни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май иртнĕ çул ял çыннисемпе тĕл пулусем 18 йĕркеленĕ. Кунпа пĕрлех ял тăрăх администрацийĕнче вырăнта пурăнакансене хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе район администрацийĕн пуçлăхĕ те, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи те йышăннă.

Вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса панă чухне ветерансемпе инвалидсен, хĕрарăмсен тата çамрăксен канашĕсем пысăк тĕкĕ пулса тăраççĕ. Çавăн пекех вĕсем ял çыннисемпе те хутшăнусене лайăххах йĕркелеме пулăшаççĕ.

Халхьи вăхăтра ял çыннине канăç паман ыйтусем çук мар. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, çĕрпе усă курассин, территорисене тирпейилем, хăт кĕртессин, куçман пурлăх объекчĕсене харпăрлăха çирĕплетессин ыйтăвĕсемпе пыракансене пурне те вăхăтра хурав панă, пулăшма тăрăшнă, пĕр ыйтăва та, пĕр сĕнĕве те асăрхамасăр хăварман.

Ял тăрăхĕн бюджечĕ пĕлтĕр 7 млн та 552 пин тенкĕ ытла пулнă. Ял тăрăхĕн хăйĕн тупăш шайĕ 1 млн та 818 пин тенкĕне яхăн. Ку кăтартусем планпа пăхниннчен пысăкрах. Апла пулин те уйрăм çынсен пурлăхĕнчен илекен, çĕр налукĕсене пухассине лайăхлатни вырăнти бюджета татах пуянлатма май паракан çăлкуç пулса тăни паллă.

2019 çулта территорире ялти çулсене юсассипе калăпăшлă ĕçсем туса иртнĕ. Вырăнти бюджет шучĕпе виçĕ ялта вак чул сарса çула юсанă. Çаппа майпа Хурăнкасси ялĕ тăрăх та шкул автобусне çӳретме тытăннă.

Кунсăр пуçне «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă автомобиль çулĕсем» наци проекчĕ шайĕнче 7,29 км тăршшĕ «Исетеркке – Актай» çула тĕпрен юсаса нормативлă шая çитерме май килнĕ. Çакна вырăнта пурăнакансем тахçантанпах кĕтнĕ. Мĕншĕн тесен кивĕ асфальт ванчăкĕпе, вак чулпа хăйсем патĕнче те çула юсама май пуласса шаннă. Чылай ял çыннин ĕмĕчĕ пурнăçланнă темелле. Кивĕ Матьăкра 200 метр, Патаккассинче 490 метр, Йӳçкассинчи Совхозная урамра 680 метр тата Центральная урамра 502 метр, Анатри Панклири Заречная урамра 550 метр, Тури Панклири Молодежная тата Овражная урамсенче 450 метр, Западная урамра 280 метр, Вăрманкассинчи Советская, Хорнкасинская, Октябрьская, Советская урамсенче пĕтĕмĕшле 2 км та 610 метр çул юсанă. Ял тăрăхĕпе 5 километр та 822 метр çул юсама май килнĕ.

Кăçал вара пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе Раккаш ялĕнче 500 метр çул юсама палăртаççĕ, çавăн пекех Çĕмĕрткассинче те 300 метр çул юсасшăн. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпех Кив Матьăк ялĕнче ача-пăча спортпа вăйă площадкине, Хурăнкасси ялĕнче культурăпа спорт площадкине йĕркелеме пăхнă. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2019 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи указĕ шайĕнче Йӳçкассинчи Совхозная урамри нумай хваттерлĕ çуртпа «Василек» ача сачĕ патĕнчи территорие хăтлăлатма 4 млн та 368 пин тенкĕлĕх проектпа смета документацийĕ хатĕрленĕ. Ялсенче контейнер площадкисем 25 тунă. 4 çемье хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ.

А. Кузьмин умри пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çинче те чарăнчĕ. Ял çыннисем çӳпçапшăн тӳлесси 60 процент шайĕнче кăна. Хуçасăр йытăсен ыйтăвĕ те чылайăшне канăç памасть. Территорири ялсенче пĕлтĕр 2 пушар пулнă пулсан, кăçал пĕр пушар пулнă та ĕнтĕ. Çынсен йышĕ чакса пыни палăрать: 2019 çулта 12 ача çуралнă пулсан, вилекенсем 43 пулнă. Шел пулин те, лару-тăру лайăх еннелле улшăнни сисĕнмест.

Р. Ананьева тĕл пулура район аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ, бюджет тупăшĕпе, расхутсемпе, налуксемпе çыхăннă ыйтусене анлăн çутатрĕ. Вăл палăртнă тăрăх, вăтам шутпа районĕпе ял çĕрĕсен кадастр хакĕ чакнă пулсан, Йӳçкасси ял тăрăхĕнче вăл 1,5 – 2 хут ӳснĕ. Апла пулсан 2020 çулшăн налуксем те пысăкланаççĕ.

Ял çыннишĕн «ял ипотекин» ыйтăвĕсем те паянхи кун пĕлтерĕшлĕ. Пухăннисене кун пирки «Россельхозбанкăн» Муркашри хушма офисĕн управляющийĕ И. Павлова тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Çавăн пекех тĕл пулура полицин участокри уполномоченнăйĕ С. Дегтярева тата полицин участокри уполномоченнăйĕсен уйрăмĕн пуçлăхĕ Д. Григорьев, районти пушар хуралĕн ертӳçи А. Сорокин, «Газпром газораспределение Чебоксары» АО районти филиалĕн ертӳçи С. Попов, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ В. Аникина, «Ударник» хуçалăх ертӳçи В. Ананьев, депутатсен район Пухăвĕн депутачĕсем А. Ивановпа Ю. Яковлев тухса калаçрĕç, ял çыннисене пырса тивекен тĕрлĕ ыйту çинче чарăнчĕç.

Тĕл пулу вырăнти сцена ăстисем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнипе вĕçленчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Орининсем хăтлăрах пурăнасшăн

**Ял тăрăхĕсенчи отчетлă черетлĕ тĕл пулу февралĕн 3-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнче иртрĕ. Ку тĕлĕшпе Культура çуртĕнче çынсем йышлăн пухăнчĕç.**

**Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Валентина Пушковăн отчетĕнчен çакă курăнчĕ. Иртнĕ çул ял тăрăхĕн бюджечĕ 6 миллион та 807 пин тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран ял тăрăхĕн тупăшĕ 2 миллион та 703 пин тенкĕпе танлашмалла пулнă, ку ĕçе 100 процент пурнăçланă.**

Территоринчи 14 ялти çул-йĕре тытса тăма 425240 тенкĕ тăкакланă, кăçал ку тĕлĕшпе 340200 тенкĕ уйăрма палăртнă. Çул-йĕр юсама 1284230,20 тенкĕ тăкакланă. Мулкачкасси ялĕнчи Уралекки урамĕнче 853260 тенкĕлĕх юсав ирттернĕ. Тереçри Новая урамри 609 метр тăршшĕ çул-йĕре юсанă. Ку ĕçе Вăрманкассинче, Çĕньял Орининта туса ирттернĕ. Шел пулин те, иртнĕ çулта ял тăрăхĕ пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ĕçлемен.

Урамсене çутăпа тивĕçтерме 360000 тенкĕ тăкакланă, хушма лампочкăсем лартнă, мĕнпур лампочкăна энерги перекетлеме май параканни çине улăштарнă. 100 пин тенкĕлĕх ку тĕлĕшри материал туяннă. Йăлари çӳп-çап контейнер площадкисене йĕркелеме 454866 тенкĕ тăкакланă, 23 площадка тунă. Пуçлăх каланă тăрăх, мĕн пурнăçлани кăна çителĕксĕр, çынсем ыйтнипе тата 5 площадка тумалла.

Ялсене хăтлăх кĕртес тĕлĕшпе тăватă ялти çăл валли бетон çаврăмсем туяннă. Патаккассипе Вăрманкассинче çĕнĕ çăлсем чавнă. Мулкачкассинче кĕпер юсанă, Çĕнтерӳ паркĕнче арка вырнаçтарнă, Сентимĕрте виçĕ касă юсанă, Патаккассинче хапха çĕнетнĕ. Ял тăрăхĕ территорире хăтлăх кĕртес ыйтупа тĕллевлĕ ĕçлесе пырать. Иртнĕ çулта ял тăрăхĕ 5 шыв башни регистрациленĕ, хуçасăр объект йышне 2 гидротехника сооруженийĕ, 3 шыв башни тата 14 шыв пăрăхĕ сетьне кĕртнĕ.

Иртнĕ çул нумай ачаллă 6 çемьене тӳлевсĕр çĕрпе тивĕçтермеллисен учетне илнĕ, пĕтĕмпе вара ку черетре 40 çемье тăрать. Территоринче асăннă категори çемьесене тӳлевсĕр çĕрпе тивĕçтерме 49 лаптăк йĕркеленĕ, ăна Патаккасси ялĕн чиккине кĕртнĕ.

Çак тапхăр тĕлне территоринче 2360 çын пурăнать. Иртнĕ çул 20 ача çуралнă, пурнăçран уйрăлнисем 34-ăн пулнă, 8 çемье çавăрнă, 6 мăшăр уйрăлнă. Территоринчи 1 çемье профилактика учетĕнче, 3 çемье – кулленхи тĕрĕслевре, вĕсенче çул çитмен ачасем пур. Çавăн пекех 17 çын тăтăш контрольте.

Ял тăрăхĕ çынсен канăвне йĕркелессипе, вăхăтне усăллă ирттерессипе ĕçлесе пырать. Территоринче 3 культура учрежденийĕ ĕçлет, вĕсенче тĕрлĕ мероприяти нумай ирттереççĕ. Ял тăрăхĕ Мулкачкассинчи клуб валли 40 пин тенкĕлĕх сцена тумĕ, Атапай клубĕ валли 36 пин тенкĕлĕх баян туянса панă. Спорт ĕçĕ валли 12 пин тенкĕ тăкакланă. Пушара асăрхаттарассипе ĕçлесе пыраççĕ. Вăрманкассинчи Южная урамра икĕ резервуар вырнаçтарнă.

2020 çулта ял тăрăхĕ пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса Пиккикассинчи 676 метр çула, Пăсăрманти шыв башнине юсасшăн. Сентимĕр тата Пиккикасси ялĕсенчи шыв башнисене капиталлă юсаса хăтлăх кĕртесшĕн. Çавăн пекех кăçал тума палăртнă ытти ĕç те сахал мар.

Бюджет ыйтăвĕ тата район аталанăвĕ çинче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Рената Ананьева чарăнчĕ, территоринче усă курман тата документсăр усă куракан çĕр пысăк лаптăк йышăннине палăртрĕ.

Тĕл пулура ветерансен вырăнти канашĕн ертӳçи Валерий Вязов питех те çивĕч ыйтусем çĕклерĕ. Вырăнти пуçлăха вăл общеcтвăлла организацисем çине ытларах тимлĕх уйăрма сĕнчĕ, вырăнти хуçалăхсен çĕрпе тĕллевлĕ ĕçлемеллине, усă курман лаптăксене çитес вăхăтра ĕçе кĕртмеллине палăртрĕ. Финанс пайĕн пуçлăхне вырăнти культура учрежденийĕсене пулăшма, территоринче музей тăвас ыйтăва районта тĕплĕн пăхса тухма ыйтрĕ, Сентимĕр ялĕнче çул тăвас тата ытти ыйтăва хускатрĕ вăл.

Полицин участокри уполномоченнăйĕ В. Алексеев территорири общеcтвăлла йĕркелĕх ыйтăвĕ çинче чарăнчĕ, çынсене асăрханулăх пирки аса илтерчĕ. Çавăн пекех тухса калаçакансем татах та пулчĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Сывлăх сыхлавĕ

# «Ăста специалист аллинчине туйччăр»

**Районти медицина ĕçченĕсем иртнĕ çулти ĕçе пĕтĕмлетрĕç. Çавна май район администрацийĕн çуртĕнчи ларусен пысăк залĕнче иртнĕ канашлура Муркаш район тĕп больницин тĕп врачĕ Николай Кожевников ĕçтешĕсем умĕнче доклад туса пачĕ. Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ Лилия Тарасова хутшăнчĕ.**

Николай Кожевниковăн докладĕнчен больница ĕçĕ-хĕлĕ тĕрлĕ енлĕ пулни палăрчĕ. Çапах та ял çыннишĕн чи пĕлтерĕшли – больницăра пулса иртекен улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем çынсен сиплевне, вĕсене медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессине пахалăхлăрах та меллĕрех йĕркелеме май паччăр.

Иртнĕ çул больницăра юсав ĕçĕсем чылай туса иртнерĕ, çĕнĕ медицина оборудованийĕ сахал мар туяннă. Халĕ район тĕп больницин хĕрарăмсен консультацийĕн уйрăмĕнче, Мăн Сĕнтĕрти поликлиникăра хĕтлăх хуçаланать, ялсене куçса çӳрекен фельдшерпа акушер пункчĕ çӳреме тытăнчĕ тата ытти те.

«Земство тухтăрĕ» программăпа ку таранччен больницăна 31 специалиста ĕçлеме илнĕ, пĕлтĕр «Земство фельдшерĕ» программăпа Шурчари ФАП-ра фельдшер ĕçлеме тытăннă. Çапах та тепĕр 6 ФАП-ра ĕçлекен çук. Врачсен, вăтам медицина персоналĕн штачĕсенче те вакансисем пур.

Районта пурăнакансем поликлиникăна пулăшу ыйтма пырассин кăтартăвне Николай Кожевников пысăк тесе палăртрĕ. Апла пулсан медицина профилактикипе çыхăннă ĕçсене вăйлатмалли куçкĕрет.

Чирсене вăхăтра тупса палăртас тĕллевпе диспансеризацине 5766 ачана, аслă ӳсĕмри çынсене планланинчен 1426 çын ытларах явăçтарнă. Тĕрĕслев тухнă аслă ӳсĕмри çынсенчен ытларах чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсене, эндокрин тытăмĕн чирĕсене тупса палăртнă пулсан, ачасен сывлав органĕсен, куç тата апат ирĕлтерессин органĕсен чирĕсем сарăлни палăрать.

Тĕп врач хăш-пĕр чир пирки уйрăммăн каласа хăварчĕ. Иртнĕ çул туберкулез чирне учченхи çултинчен ытларах тупса палăртнă. Çултаlăк вĕçленнĕ тĕле учетра туберкулезпа чирлисем пурĕ 37 çын пулнă. Пуçласа тупса палăртнă 9 тĕслĕхрен пĕрне çын вилнĕ хыççăн çирĕплетнĕ. Çавăнпа кăçал 15 çултан аслăраххисене пурне те флюорографи тĕрĕслевне явăçтарма задача лартнă.

Усал шыçă чирĕсене те сахал мар тупса палăртнă – 83. Иртнĕ çул 50 çын усал шыçă чирĕсене пула вилнĕ. «Çак чире малтанхи тапхăрсенче тупса палăртмалла, ун чухне çынна сиплеме май пур», – çапла задача лартрĕ ĕçтешĕсем умне тĕп врач.

Наркологи пӳлĕмĕн учетĕнче тăракансен йышĕ пĕчĕкленнĕ. Çав вăхăтрах районта ВИЧ-инфекциллĕ çынсем, сахăр диабечĕпе чирлисем нумайланнă.

Районта пурăнакансен вăтам пурнăç тăршшĕ кăшт ӳснĕ – 71 çулпа танлашнă. Арçынсен вăтам пурнăç тăршшĕ – 64 çул, хĕрарăмсен – 79 çул. Николай Кожевников пĕлтернĕ тăрăх, районта 80 çултан иртнисем унччен-хинчен ытларах.

2018 çултипе танлаштарсан, пĕлтĕр 21 çын сахалрах вилнĕ, анчах ачасем те 28 сахалрах çуралнă. Пурнăçран уйрăлнин сăлтавĕсем çавсемех юлаççĕ: чĕре тата юн тымарĕсен чирĕсем, нерв тытăмĕн чирĕсем, тулашри факторсем, усал шыçĕ чирĕсем тата ытти те. Çавна май тĕп врач асăннă сăлтавсене пула çынсем вилессине чакарма задача лартнине каларĕ, диспансеризацине пахалăхлă ирттермеллине асăрхаттарчĕ.

Медицина пулăшăвне ыйтма килекенсем валли, çавăн пекех ĕç вырăнĕсенче условисене лайăхлатма кăçал те юсав ĕçĕсем туса ирттерме, çĕнĕ оборудовани туянма, ĕçченсене профессии ăсталăхне ӳстермелли курссене явăçтарма палăртнă. «Çынсем пирĕн пата килсен хăйсем ăста специалист аллинчине туйччăр», – пĕтĕмлетрĕ хăйĕн сăмахне тĕп врач.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Юбилей

# Мăн Хураçка шкулĕ – 125 çулта



**125 çул каялла, 1895 çулхи çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче, Мăн Хураçкара пĕрремĕш шкул уçăлнă. Вăл М. Михайлов хресчен çуртĕнче вырнаçнă. Ачасен пĕрремĕш вĕрентекенĕ А. Смирнов дьякон, Хусанти тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнăскер пулнă. Шкултан чи малтан 4 арçын ача вĕренсе тухнă. 1899 çулта чиркӳ уçăлнă хыççăн чиркӳпе прихут шкулĕ пулса тăнă. 1904 çулта земство училищи уçăлнă. Чиркӳпе прихут шкулĕнчен 50 арçын ачапа 9 хĕр ача, земство училищинчен 53 арçын ачапа 1 хĕр ача вĕренсе тухнă. Пурнăç условийĕ йывăр пулнăран шкула пĕлӳ илме пынисенчен пĕрре пиллĕкмĕш пайĕ кăна алла свидетельство илме пултарнă. 1961 – 62 вĕренӳ çулĕнче 8 класлă шкул туса хунă. Тепĕр çулхине шкула З. Авдеев ертсе пыма тытăннă. Çурт кивĕ пулнипе вăл çĕнĕрен тăвас ыйтăва хускатнă. Мăнхураçкасем 192 ача вĕренмелĕх тунă çĕнĕ çурта 1970 çулхи ноябрь уйăхĕнче куçнă. Халĕ эпир пĕлекен шкул паян кун та çав çуртра вырнаçнă. Шкула 1991 çултанпа Т. Ермолаева ертсе пырать. Юбилей умĕн вăл пире шкул ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ.**

– Шкул хăйĕн ĕмĕрĕнче чылай паллă çынна вĕрентсе кăларнă. Вĕсем хушшинче врачсем, летчиксем, БАМ тăвакансем, вĕренӳ кĕнеки çыракансем тата ыттисем пур. Ачасене тарăн пĕлӳ пама, воспитани процесне тĕрлĕ енлĕ пурнăçласа пыма услови япăх мар. Паянхи коллективри опытлă вĕрентекенсемпе воспитательсене асăнса хăварас килет: С. Тушилкина директор çумĕ, В. Михайлова, Р. Прокопьева, Г. Шуйцева, В. Углева, В. Мазикова вĕрентекенсем, Л. Толстова, Л. Симакова, Э. Фадеева воспитательсем вĕрентӳпе воспитани процесне пĕлсе йĕркелесе пыраççĕ. Çавăн пекех О. Прокопьева, Р. Сидуков çамрăк та хастар вĕрентекенсем ачасемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлеççĕ.

**– Юлашки çулсенчи хăш ĕçсене уйрăммăн асăнса хăварнă пулăттăр?**

– Шкулта ачасене тарăн пĕлӳ пама, воспитани процесне тĕрлĕ енлĕ йĕркелеме çулсеренех патшалăх шайĕнче условисене лайăхлатса пыраççĕ. 2015 – 2019 çулсенче шкулта çак ĕçсене туса ирттертĕмĕр. «Тюльпан» ача садне çӳрекенсене шкул çуртне вырнаçтарма пӳлĕмсене çĕнĕрен йĕркене кĕртсе тĕрлĕ оборудованипе тивĕçтертĕмĕр. Шкул территорине кĕмелли, тухмалли çулйĕре сартăмăр. Çурта хутса ăшăтмалли системăна тĕпрен улăштартăмăр, модульлĕ котельнăй турăмăр. 2016 çулта шкул спортзалне юсаса хăтлăх кĕртрĕмĕр, тамбурсене çĕнетрĕмĕр, пушартан сыхланма пулăшакан алăксем лартрăмăр, столовăй валли çĕнĕ оборудовани туянтăмăр. 2017 çулта çурт çивиттине тĕпрен улăштартăмăр, класри чӳречесене çĕнетрĕмĕр. Иртнĕ çулта вара шкул территорийĕн карти-хурине те юсаса хăтлăх кĕртрĕмĕр, электроçутăсем лартрăмăр. Çак ĕçсене пурнăçлама пĕтĕмпе 5976718,42 тенкĕ тăкакларăмăр.

Шкулта пĕтĕмпе 34 ача вĕренет, шкул çумĕнчи ача садне 19 пепке çӳрет. Вĕсем шкулти тата районти тĕрлĕ конкурспа олимпиадăна хастар хутшăнаççĕ, малти вырăнсене йышăнаççĕ. 125 çул утса тухнă шкул ятне паян та унăн вĕренекенĕсем çӳллĕ шайра тытса пыраççĕ. Пирĕн выпускниксем патшалăх органĕсенче, вĕренӳпе спорт сферисенче, çĕр ĕçĕнче пысăк çитĕнӳ тунă, малашне те тĕрлĕ отрасльте çĕнĕ ятсем тухасса шанатпăр. Кашни çын кун-çулĕнче шкул паллă вырăн йышăнать, пĕлӳ панисĕр пуçне пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма вĕрентет. Çавăнпа та шкулта ялан çамрăк ăрăвăн сасси янăраса тăтăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Росгварди асăрхаттарать

# Хĕç-пăшал паратăн – укçаллă пулатăн

**Хĕç-пăшала, боеприпассене, сирпĕнекен хутăшсемпе хатĕрсене саккунсăр усранăшăн, туяннăшăн е сутнăшăн уголовлă майпа явап тыттараççĕ. Çакна асăрхаттарас тĕллевпе Муркаш район территорийĕнче хĕç-пăшала, çавăн пекех асăннă ытти хатĕре харпăр хăйĕн ирĕкĕпе килсе панăшăн тӳлевпе тивĕçтересси малалла пырать.**

«Об оружии» Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн, юридици сăпачĕллĕ çынсен те, граждансен те харпăр хăйĕн мар (тупнă е тепĕр çын панă) хĕç-пăшала упрама юрамасть. Кун пек пăшала шалти ĕçсен пайне кайса памалла. Çак йĕркене пăхăнакансем уголовлă явапран хăтăлаççĕ.

Тупнă е çын патне урăхла майпа çитнĕ хĕç-пăшал тавраш харпăр хăй ирĕкĕпе парас ыйтупа шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чаçне 8(835241)62-2-67 номерпе шăнкăравламалла.

Сирпĕнекен хатĕрсем, граната, тĕрлĕ снаряд асăрхасан вĕсем патне çывăха пыма юрамасть. Çавăнпа та кун пек вырăна тӳрех полицейскисене чĕнсе илмелле.

Аса илтеретпĕр, РФ 222 статйинче çырса çирĕплетнĕ тăрăх, хĕç-пăшала, боеприпассене, сирпĕнекен хутăшсемпе хатĕрсене саккунсăр усранăшăн, туяннăшăн, сутнăшăн уголовлă явап е ирĕкрен хăтарассипе, е обязательнăй ĕçсене явăçтарассипе, е арестпа тата штраф панипе çыхăннă.

**А. БЕЛОВ,**
**Росгвардин Чăваш Республикинчи управленийĕн инспекторĕ.**

Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул

# Шанăçа тӳрре кăларнă



**Сăн ӳкерчĕкре 1912 çулхи августăн 5-мĕшĕнче Патаккасси ялĕнче çуралнă Деомид Алексеева куратăр. Вăл 1932 çулхине Шупашкарти Чăваш медицина рабфакĕнче тăватă çул вĕренсе ку енĕпе пĕтĕмĕшле пĕлӳ илнĕ. Хыççăн çар ретне тăнă, Брянск хулинче авиаспециалистсен шкулĕнче (ШМАС) 1937 çулхи июльчен пĕлӳ илнĕ, çар чаçĕнче авиамоторист пулнă.**

Д. Алексеев тăван киле таврăннă та мирлĕ ĕçе пикеннĕ. Элĕкри çыхăну кантурĕнче союзпечать ертӳçинче тăрăшнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен Йӳçкассинчи сельпо ертӳçинче ĕçленĕ. 1941 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче Элĕк çар комиссариачĕ урлă фронта тухса кайнă. Хаяр çапăçусене кĕрес умĕн Котласри çар училищинче вĕреннĕ. Çакăн хыççăн Тухăç фрончĕн 49-мĕш çарĕн аэроçуна батальонĕнче командир пулнă, каярах самолет механикĕнче тăрăшнă. Çавăн пекех вăл Ленинград, Карели, Украина фрончĕсенче çапăçнă. Деомид Алексеевич авиаци санитари полкĕнчен 1945 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче техник-лейтенант званипе саппаса тухнă. 1945 çулхи апрель – июль уйăхĕсенче совет çар оккупацийĕ йышĕнче Польшăра, Чехословакире, Германинче пулнă.

Тăван тăрăха таврăнсан ответлă тĕрлĕ должноçра тăрăшнă. Ăна «Знамя коммунизма» колхоз ертӳçин çумĕ пулма шаннă, çавăн пекех ял Совечĕн ертӳçинче те тăрăшнă. Ответлă çын виçĕ созывра вырăнти депутат пулнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Деомид Алексеева çар ĕçĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин 2 степеньлĕ орденĕпе, 1941 – 1945 çулсенче Германие çĕнтернĕшĕн медальпе чыслань.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Хĕрĕме

*Сăввипе кĕвви Людмила Лукашевăн*

1. Янкăр уçă ак паян тӳпе,
Сар хĕвел лăпкать-çке шевлипе.
Шап-шурах ав çĕмĕрт те чие,
Тем каласшăн шăпчăк юррипе...

*Хушса юрламалли:*
Вăрттăн çеç пăхсассăн сан çине
Эп куратăп çумăр çунине.
Чарма çук тек санăн куççульне,
Çитрĕ, тейĕн, ăмăр кĕркунне.

2. Çамрăк чуншăн юрату – пĕрре!
Вăл пуçран тухмасть-çке кунĕпе.
Çывăрма выртсан та куç умне
Ун сăнарĕ тухĕ тĕлĕкре.

3. Сар хĕвел пек çутă сăн-пите
Ан йĕпет эс, хĕрĕм, куççульпе.
Юрату амантнă чĕрепе
Утма йывăр пурнăç çулĕпе.

4. Юратма вĕрен эс тӳпене,
Сар хĕвелĕн ăшă шевлине,
Çуркуннехи шурă çĕмĕртне,
Чуна тивен шăпчăк юррине.

*Хушса юрламалли:*
Пуç тайсамччĕ эсĕ тӳпене,
Туртăн эс чунпа ун уçлăхне!
Тав тусамччĕ эсĕ кун-çулне,
Чунра юлтăр ĕмĕр çуркунне.
Пил парать сана тăван анне.

Патриотла воспитани

# Музей Афганистана илсе çитерет

**Районти вĕренӳ учрежденийĕсенче оборонăпа массăллă тата спорт ĕçĕсен уйăхлăхĕ пырать. Çавна май Ильинка вăтам шкулĕнче 3 – 4 классенче вĕренекенсемпе Калайкасси шкулĕнчи Афган вăрçин музейне çитсе килтĕмĕр.**

**Музей экспоначĕсемпе ачасем кăсăклансах паллашрĕç. Калайкасси шкулĕн директор çумĕ Эльвира Портнова каласа панине вĕсем хăлха тăратсах итлерĕç.**

Кунта килекенсене Афганистанра пуç хунă паттăрсене халалласа хатĕрленĕ монумент кĕтсе илет, ăна хăрушă автомат хӳтĕлет тейĕн. Музейра минăсем, миномет снарячĕсем, оптика прицелĕ, патронсем, пулемет лентисем, совет салтакĕн тумĕ, душмансен çи-пуçĕ, афган укçисем, çав вăрçă çинчен çырнисем... – темĕн те пур. Ачасенчен хăшĕсем десантниксен рюкзакне çурăм хыçне çакса пăхрĕç. Карттă çине пăхса вĕсем совет салтакĕсем хăйсен служба тивĕçне сăртлă-туллă вырăнсенчи йывăр условисенче пурнăçланине лайăх ăнланса илчĕç.

Çак музейра пулса курнипе ачасем питĕ кăмăллă юлчĕç. Çавăнпа та музея йĕркеленĕ çынсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Ачасемпе çамрăксене патриотла воспитани парассинче унăн тӳпи те пĕчĕк мар.

**И. КАРГИН,**
**Ильинка шкулĕн вĕрентекенĕ.**

Культура

# «Хавас» хаваслатрĕ

Тойкилтĕри Культура çурчĕ çумĕнчи «Хавас» пултарулăх ушкăнĕ нумаях пулмасть Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакансем патне концертпа килсе хаваслă кăмăл-туйăм парнелерĕ. Ял клубне халăх нумаййăн пухăнчĕ. Художество пултарулăх ертӳçи Владимир Железнов пулчĕ, концерта Юлия Железнова илемлĕн ертсе пычĕ.

Сцена çине тухнă кашни çыннăн сасси шăнкăрав евĕр уçă, тумĕ тĕрлĕрен, вĕсем куракан умне чăвашсен ĕлĕкхи тумĕпе те, хальхипе те тухса савăнтарчĕç. Çакна та палăртса хăварас килет, З. Федорова чăваш халăхĕн ĕлĕкхи юрри-кĕввине чылай çул пухса пынă, ăна арчари тупра темелле пулĕ. Халăх сăмахлăхне, йăли-йĕркине халăх умне, уйрăмах çамрăксем умне кăларни тата вĕсене упрама тăрăшни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Е. Иванова вара тутар халăхĕн ташшине ташлама ăста. Вăлах куракана шӳтпе култарчĕ. Р. Сергеева хăйĕн тусĕпе «чăнкă чăваш бабкисем» пулчĕç. Пĕтĕмĕшле илсен – кашниех чăн-чăн артист, пурин те çырса та пĕтерейĕн.

Ку ушкăна йĕркеленĕренпе 2 çул та çитмен, Мăнкун уявĕнче пуçланă. «Хавас» аслă ăрури çынсене пĕрлештерет. Ушкăн районти тĕрлĕ мероприятие хутшăнать. Чăвашсен утă çи йăли-йĕркине район Акатуйĕнче кăтартассипе 1-мĕш вырăн йышăнса, вĕсем республикăри Акатуя та хутшăнма тивĕç пулчĕç. Вĕсем пирки ырă сăмах чылай çырма пулать. «Хавас» ушкăнăн ĕмĕрĕ вăрăм пултăр, куракана сцена çинче чылай çул савăнтарччăр, унта çӳрекенсен сывлăхĕсем çирĕп пулччăр.

**А. СЕМЕНОВА.**

Спорт

# Павел Охотников – республика чемпионĕ

Февралĕн 1 – 2-мĕшĕсенче Шупашкарта йĕлтĕрпе чупса республика чемпионĕ пулассишĕн ăмăрту иртнĕ. Тĕрлĕ çул ӳсĕмĕнчи спортсменсем пĕрремĕш кунне ирĕклĕ майпа чупса, иккĕмĕш кунне классика мелĕпе ăмăртнă.

Пирĕн ентеш Павел Охотников çул ӳсĕмĕпе арçынсен ушкăнĕнче ăмăртса икĕ кунĕнче те 10-шар километрлă дистанцире 1-мĕш вырăна тухма пултарнă. Калайкасси ачи Владислав Портнов (2004 – 2005 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче) икĕ кунĕнче те япăх мар кăтартупа савăнтарнă. Ирĕклĕ майпа чупассинче те, классика мелĕнче те тăваттăмĕш пулнă.

# Биатлонра мала тухнă

Саранск хулинче иртнĕ Атăлçи тăрăхĕнчи биатлон ăмăртăвĕнче пирĕн ентешсем палăрнă. Уйрăм чупура (12,5 км дистанци, 2 рубеж) Иван Степанов 1-мĕш вырăн йышăннă, Денис Рощупкин 3-мĕш пулнă. Спринт ăмăртăвĕнче Рощупкин мала тухнă, Степанов финиша ун хыççăн çитнĕ.

Çак ăмăрту Раççей шайĕнчи ăмăртăва суйланмалли шутланнă. Апла Муркаш спортсменĕсене ăнăçу сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Объявления


**К СВЕДЕНИЮ АБОНЕНТОВ!**

**Уведомляем абонентов приборов учета газа, у которых истек срок очередной поверки, о том, что с 01.04.2020г. (в соответствии с действующим законодательством) начисление платежей будет производиться по нормативам потребления газа.**

Показания таких счетчиков не будут учитываться, перерасчет платежей, начисленных по нормативам потребления газа, законодательством не предусматривается и производиться не будет.

Предлагаем в кратчайшие сроки обеспечить замену прибора учета газа или проведение его поверки и предоставить документы на обслуживающий участок ООО «Газпром межрегионгаз Чебоксары». Для выполнения работ по замене счетчика или его демонтажу для направления на поверку, необходимо подать заявку в газораспределительную организацию АО «Газпром газораспределение Чебоксары» или другие организации, имеющие разрешительные документы на данный вид деятельности (Подробнее на интернет-сайте www.gmch.ru www.chsetgaz.ru).

**Также напоминаем, что в соответствии с действующим законодательством, абонент обязан:**

**– ежемесячно передавать показания прибора учета газа** и своевременно исполнять договорные обязательства по оплате;

**– заключать договор о техническом обслуживании внутридомового или внутриквартирного газового оборудования** (ТО ВДГО/ВКГО) и обеспечить проведение работ в установленные сроки (ежегодно).

**Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр. Тел. 8-937-015-35-40.** 3-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 150 руб!!! Тел. 8-909-300-33-66.** 5-97.


**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Пирĕн хаклă та юратнă çыннăмăр, Турай ялĕнче пурăннă Михаил Илларионович Иванов йывăр чире пула пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Çак йывăр хуйхă вăхăтĕнче пирĕнпе юнашар пулнăшăн, хисеплĕ çыннăмăра юлашки çула тирпейлĕсе ăсатма пулăшнăшăн пĕтĕм тăвана, Муркаш райпо ĕçченĕсене, ял-йыша, пытарма пынă мĕнпур çынна чун-чĕререн тав тăватпăр. Сирĕн кун-çул вăрăм та телейлĕ пултăр, ырă туни каялла ырăпах таврăнтăр.

**Мăшăрĕ, ывăлĕн, хĕрĕн, Черновсен, Мироновсен, Санинсен çемйисем.**

Прогноз погоды — По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления по- | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | -5 | -5 | -8 | -13 | -12 | -14 | -12 | -14 | -13 | -11 | -10 | -14 | -17 | -18 | -15 | -20 |
| Ощущается | -12 | -12 | -16 | -21 | -19 | -20 | -18 | -20 | -20 | -19 | -16 | -20 | -25 | -26 | -22 | -28 |
| Давление | 729 | 731 | 734 | 737 | 739 | 740 | 739 | 737 | 735 | 735 | 737 | 740 | 742 | 744 | 747 | 750 |
| Ветер | 6 | 6 | 7 | 5 | 4 | 3 | 3 | 3 | 4 | 5 | 3 | 3 | 4 | 4 | 3 | 3 |

Объявления


**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; шпунтованные доски, вагонку; цемент, кирпич.** Доставка. Тел. **8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52.** 12-20.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Срубы на заказ. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 4-10.

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева реализует ячмень по оптовой цене за 8 руб/кг и ЭКД – 20 руб/кг с места. Возможна доставка. Тел. 8-937-012-58-80, 8-937-012-51-31, 8-937-012-13-34, 8-937-012-73-75.** 5-12.

* * *

**Все виды строительных работ** от подрядчика: дома, бани, гаражи, фундамент, забор, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Проект, смета – в подарок. Работаем: материнским капиталом, сельской ипотекой. Рассрочка, кредит. Тел. 8-937-397-08-71, 8-937-940-80-55. 2-10.

Иккĕмĕш пăранламалли качака тата качака путеккине сутатăп. Уйкас ялĕ. Тел. 8-906-386-39-29.

* * *

Продаются бычки от 1 до 3 мес. Тел. 8-909-302-57-76.

* * *

Тăвată уйăхри хĕрлĕ-шурă тата хура-шурă тына пăрусем сутатăп. Тел 8-927-868-89-80.

**РАБОТА / ĔÇ**

**Агрохолдинг приглашает на постоянную работу и вахту в Московскую область. Бесплатно: проживание, питание, проезд. Оплата – 1300 руб. в день. Тел. +7-964-509-61-61.** 3-4.

**КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП**

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО.** Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. **Тел. 8-961-344-03-82. Рома.** 7-20.

* * *

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг, КОРОВ, ТЕЛОК. ДОРОГО. Тел. 8-937-951-19-03.** 14-16.

* * *

**ĔНЕ, ВĂКĂР, ТЫНА ПĂРУСЕМ, СУРĂХСЕМ ТУЯНАТПĂР. Тел. 8-905-341-69-25.** 4-10.

**ЗАКУПАЮ КОРОВ, БЫЧКОВ. Тел. 8-965-688-01-77, Андрей.** 15-15.

**КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ.** Дорого. **Тел. 8-937-952-33-80.** 5-5.

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33.** 5-5.

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК НА МЯСО, бычков на откорм и вынужденный забой. Тел. 8-961-345-77-89.** 1-25.

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО.** Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. **Тел. 8-927-667-68-64.** 1-10.


Районти ют чĕлхе вĕрентекенсен пĕрлешĕвĕ Юнкăри вăтам шкулта нумай çул акăлчан чĕлхи вĕрентнĕ

**Ольга Витальевна**
**ПЕРОВА**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе тата ĕçтешĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Моргауши – Хлеб» ООО коллективĕ кунти çăкăр пĕçерекен Л.Ю. Васильевan амăшĕ

**Вера Сергеевна**
**ЯКИМОВА**

вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çемйипе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ ĕç ветеранĕ, пенсионерка

**Вера Сергеевна**
**ЯКИМОВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта повар пулса ĕçлекен О.С. Зареева аппăшĕ

**ВЕРА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.И. Волкова.
Пичете панă 04.02.2020 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4499.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.